# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

# Ача çемье ăшшине туйса ӳстĕр

***«Образование» наци проекчĕ шайĕнче «Поддержка семей, имеющих детей» федераци проекчĕ пурнăçланать. Ăна пурнăçа кĕртессине Чăваш Республикинче те пăхса хунă***

Çак проектпа виçĕ çулччензи ачасене аталанма пулăшакан психологипе педагогика программисене пурнăçа кĕртмеллине, шкулччензи пĕлĕве килте илекен ачасен ашшĕ-амăшĕсене методикăпа консультаци пулăшăвне пама майсем тăвассине, кунсăр пуçне çемьене ачана усрава е пурăнма илес текенсене пулăшу парассине те пăхса хунă.

Çак услугăсене коммерциллĕ мар пĕрлешӳсем тата ытти организаци урлă йĕркелеме палăртнă. 2019 çулта çак услугăсемпе 10-ран сахал мар субъектра тивĕçтерес тĕллев пулнă пулсан, 2024 çулта ку ĕç пур субъектра та пурнăçланмалла.

**Муркаш район администрацийĕн вĕренӳ пайĕнчен** пĕлтернĕ тăрăх, çакăн пек методика, психологи тата педагогика пулăшăвне паракан центрсем хальхи вăхăтра 7 – «Путене», «Солнышко», «Малыш», «Радуга», «Рябинушка», «Улыбка» ача сачĕсенче ĕçлеççĕ. Çапла хăш ял тăрăхĕнче пурăннине кура, ашшĕ-амăшĕсен çывăхри центра кайма май пур.

2019 çулта, сăмахран, çак центрсене пынă ашшĕ-амăшĕсене пурĕ пĕр пин ытла хутчен тĕрлĕ услугăпа тивĕçтернĕ. Кăçал, паллах, лару-тăру коронавирус сарăлнине пула улшăннă. Апла пулин те пулăшу ыйтнисене дистанци мелĕпе 330 ытла хутчен методика, психологи, педагогика тĕлĕшĕнчи е тата логопед пулăшăвĕпе тивĕçтернĕ. Кунсăр пуçне çемьесене тухса пулăшу парассине те йĕркеленĕ – ыйтнине кура педагогсем икĕ çемьене çитсе килнĕ.

Çак центрсен ĕçĕпе, унта илекен пулăшу пахалăхĕпе ашшĕ-амăшĕсем кăмăллă пулни курăнать. Пĕлтĕр акă илнĕ пулăшăвăн тивĕçтернĕ шайĕ вăтамран 89 процентпа танлашнă.

**Район администрацийĕн опекăпа попечительство секторĕ** вара çемьене пурăнма илекен е ачана усрава илекенсене пулăшу парассипе тимлет. Сектор ертӳçи Наталия Смирнова каласа панă тăрăх, ачана çемьене пурăнма, опекăна е усрава илес текен çынсене малтанхи çулсенче те ятарлă курссене явăçтарнă.

Палăртса хăвармалла, вĕренни пирки алла свидетельство илнисен Раççей Федерацийĕн территорийĕнче пурăнакан ачана çемьене илме ирĕк пур.

Çапла 2018 çулта çак курссенче 10 çын вĕреннĕ, вĕсен шутĕнче 3 мăшăр пулнă. Вĕренсе пĕтернисенчен икĕ мăшăр тата тепĕр çын воспитани парса ӳстерме хăйсен çемйисене ача илнĕ.

2019 çулти ноябрь пуçламăшĕ тĕлне районти 4 çын çак курссенче вĕреннĕ, вăл шутра – пĕр мăшăр.

Вĕренӳ курсĕсенчи занятисене опекăпа попечительство секторĕн специалисчĕсем, тăлăх ачасен тата ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасен Шупашкарти центрĕн, çавăн пекех вĕренӳ тата ачасене тĕрлĕ енлĕ пулăшакан Шупашкарти центрĕн специалисчĕсем ирттернĕ.



Палăртма кăмăллă, вĕренсе тухнă пур çын та хăйĕн çемйине ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр е тăлăха юлнă ачасене пурăнма илнĕ.

2019 çулти ноябрь уйăхĕнчен пуçласа çак вĕренӳ курсĕсене йĕркелес полномочине вĕренӳ тата ачасене тĕрлĕ енлĕ пулăшакан Шупашкарти центра панă. Апла пулин те районти опекăпа попечительство секторĕ ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр тата тăлăха юлнă ачасене çемьесене вырнаçтарассипе те, çемьене ача илес текен тата илнĕ çынсене пулăшу парассипе те тимлет.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

Врач сĕнет

# Грипран асăрханас пулать

Грипп чирĕпе хăйĕн пурнăçĕнче епле майпа та пулин кирек кам та тĕл пулатех. Хăшĕ-пĕри грипп хăрушлăхне ун пекех ямасть, çакна сунас вырăнне кăна шутлать. Теприсем «чăх-чĕп» е «сысна» грипĕнчен ытларах шикленеççĕ. Çав вăхăтрах вара яланхи грипп вĕсенчен те хăрушăрах пулма пултарать.

**Грипп: мĕн-ха вăл?**

Грипп – вирус чирĕ, ытларах чухне сывлав органĕсене сиенлет. Грипп ОРЗ (острые респираторные заболевания), тĕрĕсрех пулсан, ОРВИ (острые респираторные вирусные инфекции) категорине кĕрет.

Гриппа чирленин сăлтавĕ иммунитет хавшанинче е шăннинче мар. Сын унпа вирус – **грипп вирусĕ** лекнине пула чирлет. Грипп вĕçĕм улшăнать. Медицинăра грипăн виçĕ тĕсне (А, В тата С) асăнаççĕ пулсан, вĕсем ылмашăнса тăнипе пĕрлех хăйсен структурине те улăштарма пултараççĕ. Çавна пула çуллен эпидеми вăхăтĕнче пирĕн иммун системи çĕнĕ микроорганизмпа тĕл пулать. Кун пек чухне унпа кĕрешесси те йывăрланать.

**Чир епле майпа ерет-ха?**

Чире ертекенни – чирлĕ çын. Сайра-хутра вара чир сыснаран, чăх-чĕпрен те ерме пултарать. Çавна та манмалла мар: хăйне япăх мар туякан, чирлĕ тесе шутламан çын та чир ертме пултарать.

Чир сывлăш-пĕрчĕ (воздушно-капельный) мелĕпе сарăлать. Чирлĕ çын ӳсĕрнĕ, сунасланă чухне, çавăн пекех сывланă чухне те хăйĕн тавра «чирлĕ анлăш» туса хурать – сывлăшри сăмсаран тухнă пĕрчĕсем. Çак пĕрчĕсене сывласа илнĕ май грипп вирусĕ сывă çыннăн организмне лекет.

**Грипп мĕнле палăрать-ха?**

Унăн симптомĕсем ытларахăшне паллă. Палăрман вăхăт – инкубаци тапхăрĕ – 5 – 6 сехетрен тытăнса 3 талăк таран пулать. Вăл мĕн вăхăт тăсăласси вирус тĕсĕнчен, çынна вирус мĕн чухлĕ лекнинчен тата конкретлă çыннăн иммун системин вăйĕнчен килет. Инкубаци тапхăрĕ хыççăн чирĕн паллисем палăрма тытăнаççĕ. Вĕсен йĕрки те тĕрлĕ çыннăн тĕрлĕрен пулма пултарать:

– сунаслани, сăмса питĕрĕнни, апчхулани, пыр кăтăкланни – чирĕн ытларах чухнехи малтанхи паллисем;

– вăй пулманни, шăмшак йывăрри пуçланакан чирĕн малтанхи паллисем пулма пултараççĕ е маларах асăннă паллăсем хыççăн палăраççĕ;

– ытларах чухне чирленĕ çыннăн температури малтанхи сехетсенчех ӳсет. Грипп чухне температура 40 градус таран е ытларах ӳсесси те, вăйлă сивчир те пулма пултарать;

– ӳслĕк кăшт каярах палăрать. Малтанах типĕ ӳслĕк пулать, тип пыр тататăласла ӳсĕрсен те нимĕн те тухмасть. Майĕпен ӳслĕк çемçелет, çăра сурчăк тухма тытăнать. Вĕçĕм ӳсĕрнĕ чухне карланкă шыçни тата сывлама йывăрри те палăрма пултарать.

**Грипп чирĕ шала кайни**

Грипп ансат чирех мар. Çапах та хăрушăраххи – вăл шала кайни. Кун пекки çыннăн иммун системи вăйсăр чухне пулма пултарать (сăмахран, ватăрах çынсен те, ачасен те):

– бронхит;
– пневмони;
– менингит тата энцефалит;
– тытса пăрахни;
– галлюцинациллĕ психоз.

**Грипран сипленесси**

Грипран сипленнĕ чухне чирлĕ çынна канлĕх туса парас пулать – унăн ытларах выртмалла. Грипп чухне тĕп вырăнта – симптомати сиплевĕ. Медицина препарачĕсемпе чирĕн йывăр симптомсене ирттерсе яма, органсем малалла сиенленессине асăрхаттарма усă кураççĕ.

**Грипп профилактики**

Грипран асăрханасси, чирлĕ çынна сыватассипе танлаштарсан, чылай эффективлăрах. Тĕрĕссипе грипран асăрханассипе профилактика мероприятийĕсене çултаlăк тăршшĕпех пурнăçласа пымалла. Вĕсен шутĕнче:

– тĕрĕс апатланни, ытлашши йывăр мар ĕçлени, организма пиçĕхтерни иммунитета ӳстерме пулăшаççĕ, апла пулсан грипа хирĕç тăрасси те ӳсет;

– вакцинаци – грипп профилактикин тĕп медицина мелĕ. Çуллен унччензи çулхи эпидеми анализне тĕпе хурса çĕнĕ вакцина туса хатĕрлеççĕ. Ăна вирус улшăнассине шута илсе хатĕрлеççĕ. Вакцинацие эпидеми пуçланиччен 1 – 3 уйăх маларах ирттереççĕ;

– маска тăхăнни сывлав çулĕсене вирус лекесрен сыхлать. Кун пек чухне вара маскăна кунне темиçе хут улăштарасси пирки манмалла мар. Унсăран маска хăй те чир ертекен çăлкуç пулса тăрас хăрушлăх пур;

– поливитаминсем тата С витамин çини;

– кунсерен ыхра çини çăвар ăшчиккинчи микроорганизмсен шутне палăрмаллах чакарать;

– сăмсана чӳхени уйрăмах ĕçре, шкулта, обществăлла транспорт çинче пулнă хыççăн усăллă. Сăмсана чӳхеме физраствора усă курма пулать. Хыççăн вара сăмса шăтăкне кирек епле çу та сĕрме юрать. Çакă вăл сăмса шăтăкĕнчи лăймака витĕмĕ типсе ларасран пулăшать;

– эпидеми вăхăтĕнче çынсем йышлă пухăнакан вырăнсенчен пăрăнма тăрăшни;

– пӳлĕме час-часах нӳретсе шăлса тасатни;

– сăмса шăтăкне оксолин маçĕпе сĕрсе тăни. Çак процедура уйрăмах çынсем йышлă пулакан вырăнсене каяс умĕн усăллă;

– эпидеми пуçлансан грипп профилактики шучĕпе интерферонпа тата интерферон индукторĕсемпе, вирусла кĕрешмелли препаратсемпе (сăмахран, римантадинпа) усă кураççĕ.

Грипп – хăрушă чир. Çапах та хыпăнса ӳкме тата кĕркуннехи-хĕллехи тапхăра кĕрессинчен шикленме кирлĕ мар. Профилактика мероприятийĕсене пурнăçлани тата сывă пурнăç йĕркине тытса пыни грипран хӳтĕленме, епле пулсан та унăн йывăр формисенчен сыхланма пулăшĕ. Пурне те сывлăх пултăр!

**Г. СОКОЛОВА,**
**Муркаш район тĕп больницин**
**эпидемиолог врачĕ.**